Муркаш район хаçачĕ

# «Çĕнтерÿ ялавĕ»

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

80 (7505) № ✻ Шăмат кун, 2007 çулхи сентябрĕн (авăн) 29-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

## Октябрĕн 1-мĕшĕ – Пĕтĕм тĕнчери ватă çынсен кунĕ

### ХИСЕПЛĔ ВЕТЕРАНСЕМ! СИРЕ ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ВАТĂ ÇЫНСЕН КУНĔ ЯЧĔПЕ САЛАМЛАТĂП!

Сирĕн пурнăç çулĕ Тăван çĕршывшăн паттăрла ĕçленин тивĕçлĕ тĕслĕхĕ пулса тăрать. Эсир çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне çапăçусенче сыхласа хăварнă, тылра вăй-хала шеллемесĕр ĕçленĕ, халăх хуçалăхне ура çине тăратнă, Чăваш Республикин экономика вăй-хăватне çирĕплетнĕ. Эсир çитĕнекен ăрăва Тăван çĕршыва юратма, иксĕлми вăй-халпа ĕçлеме хăнăхтарса ÿстернĕ тата халĕ те хăвăрăн паха опыта, ăсталăха тата ырă йăла-йĕркесене çамрăксене паратăр.

Аслă ăрушăн тăрăшасси республика ертÿçисен пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕçĕ пулса тăрать. Пенсионерсемпе ветерансене социаллă хÿтлĕх парасси çине эпир уйрăмах пысăк тимлĕх уйăратпăр. Кăçал Чăваш Енре «Чăваш Республикин ĕç ветеранĕ» хисеплĕ ятне туса хунă. Çавна май адреслă хушма пулăшу илекенсен шучĕ палăрмаллах ÿсрĕ.

Чăваш Енре çулланнă çынсен интеллектуаллă тата культура ыйтăвĕсене тивĕçтерме условисем япăх мар. Шупашкарта пенсионерсем валли йĕркеленĕ компьютер клубĕ ăнăçлă ĕçлет. Республикăра ялсенчи тĕслĕх 500 библиотека сетьне йĕркеленĕ. Вĕсене хальхи оборудованисемпе тивĕçтернĕ. Вĕсем ялсенче культурăпа ăс-хакăл центрĕсем пулса тăчĕç, çамрăксене те, аслă ăру çыннисене те пĕрлештерсе тăраççĕ.

Хисеплĕ ветерансем, тайма пуç сире пултарулăхпа çирĕплĕхшĕн, ăшă кăмăлпа чăтăмлăхшăн. Эсир тăван республикăпа çĕршывшăн тунă тата халĕ те тăвакан ĕçĕршĕн сире питĕ пысăк тав сăмахĕ калатăп.

Пурсăра та сире ырă сывлăх, телей, савăнăç тата анăçу сунатăп!

**Н. ФЕДОРОВ,**
**Чăваш Республикин Президенчĕ.**

### АСЛĂ ĂРУН ХИСЕПЛĔ ПРЕДСТАВИТЕЛĔСЕМ!

Пĕтĕм Раççейри «Раççей пенсионерĕсен союзĕ» обществăлла организацин Чăваш регион уйрăмĕ ячĕпе сире пĕтĕм халăх уявĕпе – Пĕтĕм тĕнчери ватă çынсен кунĕпе чĕререн саламлатăп! Сире çирĕп сывлăх, ырă кăмăлпа чун ăшши, тăвансемпе çывăх çынсен тимлĕхне сунатăп.

**В. КРАСНОВ,**
**Пĕтĕм Раççейри «Раççей пенсионерĕсен союзĕ» обществăлла организацин Чăваш регион уйрăмĕн Муркаш районĕнчи представителĕ.**

### ХИСЕПЛĔ ĔÇПЕ ВĂРÇĂ ВЕТЕРАНĔСЕМ, ТЫЛ ĔÇЧЕНĔСЕМ, ХАКЛĂ ВАТĂСЕМ!

Сире Пĕтĕм тĕнчери ватă çынсен кунĕ ячĕпе пĕтĕм чун-чĕререн саламлатăп. Сирĕн хушăра Аслă Отечественнăй вăрçăра Тăван çĕршыв ирĕклĕхне хÿтĕленĕ, Аслă Çĕнтерĕве çывхартассишĕн тылра ырми-канми вăй хунă ватă çынсем те сахал мар. Вăрçă хыççăн та сирĕн пурнăç çăмăл пулман: халăх хуçалăхне ура çине тăратассишĕн кунне-çĕрне пăхмасăр вăй хунă, çĕршывăмăр çирĕп те хăватлă пултăр тесе тимленĕ. Тавах сире нимпе танлаштарма çук паттăрлăхăршăн, пархатарлă ĕçĕршĕн. Паян та эсир район пуласлăхĕшĕн çунса тăратăр. Çитĕнекен ăрура ăс-хакăл, ĕçченлĕхпе патриотизм туйăмне çирĕплетететĕр. Сирĕн умăрта эпир çĕре çити пуç таятпăр.

Хисеплĕ çыннăмăрсем! Эсир нихăçан та нимĕнле йывăрлăха та парăнман. Çирĕппĕн малаллах утнă, çитĕнÿ хыççăн çитĕнÿ тунă. Сирĕн пуян опытăр пирĕншĕн çав тери хаклă. Эпир сирĕнтен вĕренсе пыратпăр, йывăрлăхсене чыслăн çĕнтерме тăрăшатпăр.

Районти ветерансен, район администрацийĕн пуçлăхĕ çумĕнчи пуян опытлă ватă çынсен Канашĕсем, вĕсен усăллă сĕнĕвĕсем пире ĕçре пулăшса пыраççĕ, малалла çул кăтартса параççĕ, çĕнĕ çитĕнÿсем тума хавхалантараççĕ.

Пурне те сире çирĕп сывлăх, ăнăçу, телей сунатăп. Тата нумай-нумай çул савăнса пурăнмалла пултăр. Çывăх çыннăрсен ăнланăвĕпе чун ăшши ватлăхăра канлĕх кÿтĕр.

**Ю. ИВАНОВ, район пуçлăхĕ.**

### ХИСЕПЛĔ ВЕТЕРАНСЕМ ТАТА АСЛĂ ĂРУ ПРЕДСТАВИТЕЛĔСЕМ!

Ватă çынсен кунĕнче сире пысăк тав сăмахĕ калас тетĕп. Эсир чăннипех те хисепе, тимлĕхе тивĕç. Мĕншĕн тесен эпир, сирĕн ачăрсемпе мăнукăрсем, лайăхрах пурăнччăр тесе эсир пĕтĕмпех тунă тата тăватăр та. Сирĕн пурнăç опычĕпе ăс-тăн республикăри тата çĕршыври çамрăк ăрушăн калама çук пысăк пĕлтерĕшлĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ халăхра çапла калаççĕ: «Ватти ăс памасăр ĕç ăнмасть».

Аслă Отечественнăй вăрçă ветеранĕсемпе тыл ĕçченĕсене вăрçăри тата ĕçри паттăрлăхшăн чун-чĕререн тав сăмахĕ калама ирĕк парсамăр.

Сире пурсăра та пĕтĕм чĕререн нумай çул пурăнма çирĕп сывлăх, телей, ăнăçу, хăвăршăн тăрăшакан ачăрсемпе тав тăвакан мăнукăрсем сунатăп. Пуç таятăп сирĕн умăрта!

**П. СЕМЕНОВ,**
**«Единая Россия» парти фракцийĕн Раççей Федерацийĕн Патшалăх Думин депутачĕ.**

## Пирĕн паллă ентешсем

# Геройсем çĕршыва хăватлăрах тăваççĕ

Чăваш Ен – чăннипех чи тивĕçлĕ çынсен çĕршывĕ. Вĕсен пурнăç çулĕ ыттисемшĕн тĕслĕх пулса тăрать. Андриян Николаевăн космосри паттăрлăхĕ пирки республикăра пурăнакан чи пĕчĕк ачасем те аван кăна мар, ытти çĕрте те аван пĕлеççĕ. Вăл хăй пĕччен кăна боевиксем вырнаçтарнă сирпĕтмелли 8 устройствăна сиенсĕрлетнĕ, çапăçу вăхăтĕнче танк экипажне хÿтĕленĕ. Йывăр аманнă пулин те, боевиксен за-



пĕлеççĕ. Çĕршыв геройĕ çĕршыва, чăваш çĕрне чунтан парăннипе тата юратнипе палăрса тăнă. Вăл яланах тăван ен пирки хăйĕн юлташĕсемпе ĕçтешĕсене хавхаланса каласа панă, Шуршăлта Раççейĕпе пĕртен-пĕр Космонавтика музейĕ пулнипе чунтан мăнаçланнă. Андриян Николаев ку вăл хăйĕн космонавт-юлташĕсен музейĕ тенĕ, вĕсене Чăваш Ене хăнана чĕнме тăрăшнă.

Пирĕн çĕршыв геройĕсем, паллă космонавтсем Борис Волынов, Виктор Горбатко, Владимир Ляхов, Николай Бударин Андриян Николаев пурăннă чухне кăна мар, халĕ те час-часах пирĕн республикăна килсе çÿреççĕ. Николай Бударин та чăваш çĕрĕ çинче çуралса ÿснĕскер, Улатăр районĕнчен. Вăл пĕр хут çеç мар космоса çĕкленнипе тата уçă космоса тухнипе республикăна чапа кăларнă. Андриян Николаев, Николай Бударин пек çынсен геройла тĕслĕхĕсене тĕпе хурса республикăн çамрăк ăрăвĕ патриотизм, тивĕç, чыс тата çĕршыв пуласлăхĕшĕн ответлă пулнин туйăмĕсене ăша хывса ÿсет.

Евгений Борисов 27 çулта. Çурçĕр Кавказра наемниксен бандисене пĕтерессипе çар заданийĕсене пурнăçланă чухне хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнă май ăна халĕ тăван Чăваш Енре садисемпе икĕ хутчен тытăçăва кĕнĕ. РФ Президенчĕн Владимир Путинăн указĕпе гварди кĕçĕн сержантне Евгений Германович Борисова Раççей Геройĕн ятне панă. Халĕ вăл республикăри пĕр пĕчĕк предприятие ертсе пырать. Предприяти Атăл тăрăхне аталантарма тÿпе хывать, Октябрьскинче санатори тăвать.

Çĕршыв геройĕсем, Чăваш Ен Президенчĕн Николай Федоровăн республикăна системăллă модернизацилессин политикине пурнăçа кĕртме пулăшса пырса, пĕр тĕллев тавра пĕтĕçеççĕ – республикăна чечеклентерес, унта пурăнакан çынсен пурнăçне лайăхрах та хăтлăрах, пуянрах тăвас тесе. Çакăн пек çынсем çинче тытăнса тăрать те ĕнтĕ Раççей çĕршывĕн пĕрлĕхĕ, хăвачĕ тата вăйĕ.

**О. ИЛЬИНСКАЯ.**

**Сăн ÿкерчĕкре сулахайран сылтăмалла: Раççей Геройĕ Николай Бударин летчик-космонавт, икĕ хутчен Совет Союзĕн Геройĕ Виктор Горбатко летчик-космонавт, Раççей Геройĕ Евгений Борисов, Чăваш Республикин Президенчĕ Николай Федоров, икĕ хутчен Совет Союзĕн Геройĕ Владимир Ляхов летчик-космонавт, икĕ хутчен Совет Союзĕн Геройĕ Борис Волынов летчик-космонавт.**

## Пĕтĕм тĕнчери ватă çынсен кунĕ умĕн

# Тимлĕхрен хакли çук

***Çамрăк чух, кирек епле ĕçе те тума вăй пур чух, ĕмĕрех çакăн пек çамрăк, вăр-вар пулассăн туйăнать. Анчах çулсем кайнăçемĕн ватлăх паян пĕрин патне, ыран теприн патне алăкран пырса шаккать. Тимлĕх, пулăшу аслă ăру çыннисемшĕн кулленхи юлташ пулса тăрсан çеç ватлăх канлĕ пулĕ.***

***Мĕнлерех лару-тăру ку енĕпе пирĕн районта? Общество пурнăçĕнчен айккинче тăрса юлмаççĕ-и ватăсем? Тивĕçлĕ пулăшусăр юлмаççĕ-и? Пĕтĕм тĕнчери ватă çынсен кунĕ умĕн çак тата ытти ыйтусене уçăмлатма ыйтрăм та ĕнтĕ эпĕ ЧР Сывлăх сыхлавĕн тата социаллă аталану министерствин пирĕн районти социаллă хÿтлĕх пайĕн ертÿçинчен Н.П. ПЕТРОВАРАН.***

**– Нина Пантелеевна, чи малтанах калăр-ха, тархасшăн, нумай-и пирĕн районта ватă çынсем?**

– Пирĕн районта паянхи куна пĕтĕмпе 10100 пенсионер. Вĕсенчен Аслă Отечественнăй вăрçă ветеранĕсем тата инваличĕсем 176-ăн, тăлăх салтак арăмĕсем 37-ĕн, тыл ĕçченĕсем 2548-ăн, ĕç ветеранĕсем 5383-ĕн.

Кунта çакна палăртса хăвармалла. Хĕрарăмсем 55, арçынсем 60 çул тултарнă пулсан, ял тăрăхĕсенче, предприятисемпе организацисенче, учрежденисенче Пĕтĕм тĕнчери ватă çынсен кунне халалласа иртterекен мероприятисене чĕнмелле. Вĕсенчен пурте тенĕ пекех ЧР Президенчĕн Н. В. Федоровăн салам открыткине тивĕçĕç. Пурĕ 8060 çын илĕ Николай Васильевичăн саламне.

**– Аслă ăрури çынсене паян патшалăх пысăк тимлĕх уйăрать. Çÿлерех асăннă категорисене кĕрекенсем тĕрлĕрен çăмăллăхсемпе усă кураççĕ. Çакăн çинче чарăнса тăрсан аванччĕ.**

– “Ветерансем çинчен” федераллă саккунпа килĕшÿллĕн пирĕн района 1541,5 пин тенкĕ укçа уйăрнă пулсан, 952,6 пин тенкипе усă курнă. “РФ инвалидсене хÿтлĕх парасси çинчен” федераллă саккунпа 1980,6 пин тенкĕ уйăрнă пулсан, 1815,5 пин тенкине усă курнă 8 уйăхра. Çавăн пекех ЧР “Вăрçă вăхăтĕнчи тыл ĕçченĕсене тата ĕç ветеранĕсене социаллă пулăшу парасси çинчен” саккунĕпе килĕшÿллĕн кăçал çак категорие кĕрекенсене 11163 пин тенкĕлĕх çăмăллăх панă. Вăл шутран ĕç ветеранĕсене уйăхсерен укçан паракан тÿлеве 8007 пин тенкĕлĕх панă, телефонпа усă курнăшăн компенсаци – 504 пин тенкĕлĕх. Уйăхсерен укçан паракан тÿлеве тыл ĕçченĕсене 4645,3 пин тенкĕлĕх, реабилитациленисене 776,4 пин тенкĕлĕх панă.

Кунсăр пуçне РФ Чернобыльти АЭС инкекне сирме хутшăннисем те тĕрлĕ çăмăллăхсемпе усă кураççĕ. Вĕсене 45,6 пин тенкĕ çурт-йĕрпе коммуналлă пулăшусемшĕн тÿлеме çăмăллăх панă. Çавăн пекех апат-çимĕç туянма – 962, 9 пин тенкĕ тата ыт. те.

**– Пĕччен пурăнакан ватăсене пулăшу ытларах кирлĕ пек туйăнать. Ку енĕпе мĕнлерех ĕçсем туса ирттернĕ кăçал?**

– Пĕтĕмпе районĕпе пĕччен пурăнакан ватăсем 802. Вĕсенчен 120-шне килте пăхса тăратпăр. Май килнĕ таран пулăшма тăрăшатпăр. Кăçал кăна акă тĕрлĕ енлĕ социаллă пулăшу илме пирĕн пата 1052 ватă çынпа инвалид килчĕ. Çулталăк пуçланнăранпа 17 ватă çынпа инвалида килте пăхса тăмалла турăмăр. Тепĕр 7 пенсионера интернатсене вырнаçтарнă. Тата 9-шне – ватă граждансене тата инвалидсене вăхăтлăх тытмалли уйрăма.

Палăртса хăвармалла, ватă граждансемпе инвалидсене вăхăтлăх тытмалли уйрăмсем (ветерансен çурчĕсем) 2. Вĕсенче пурĕ 28 çын пурăнать.

Укçа-тенкĕ тĕлĕшĕнчен те пулăшмасăр май çук ватăсене. Кăçал кăна РФ Пенси фончĕ урлă пĕчĕк пенси илекен ĕçлемен 307 ватă çынна адреслă пулăшу панă. Пурĕ 924,1 пин тенкĕлĕх. Пĕтĕмпе вара кăçал социаллă пулăшу паракан комиссие 235 пенсионертан заявлени килнĕ, вĕсене пурне те пăхса тухнă. Ĕçлемен тепĕр 5 пенсионера, пушарта шар тÿснĕскерсене, 114 пин тенкĕлĕх пулăшнă. Унсăр пуçне РФ ПФ урлă Пĕтĕм тĕнчери ватă çынсен кунĕ умĕн сахал тупăшлă 135 пенсионера пĕтĕмпе 125,49 пин тенкĕлĕх пулăшу панă.

**– Нина Пантелеевна, час-часах çапла каланине илтме пулать: “Ĕçлеме пăрахсан, никама та кирлĕ мар пуль эпир”. Сирĕн шухăша пĕлес килет ман ку тĕлĕшпе.**

– Килĕшесех килмест ман ку шухăшпа. Ватă çынсем хăйсене пурнăç юххинче туйччăр тесе хамăртан килнине йăлтах тăватпăр. Час-часах тухса çÿретпĕр эпир ватăсем патне килсене. Çулталăк пуçламăшĕнчех сахал тупăшлă тата пĕччен пурăнакан 45 пенсионер патне çитрĕмĕр. Вĕсен йăлари условийĕсемпе паллашрăмăр. Çакăн хыççăн 37 пенсионера электросчетчиксене тÿлевсĕрех улăштарса панă. Февраль уйăхĕнче килте медицинăпа социаллă пулăшу паракан уйрăм уçас тĕллевпе тата тепĕр 98 пенсионерпа инвалид патĕнче пултăмăр, вĕсен пурнăç условийĕсене тишкертĕмĕр. Мартра 62 Аслă Отечественнăй вăрçă участникĕпе инваличĕ патĕнче пултăмăр. Халĕ акă сентябрь-октябрь уйăхĕсенче пĕччен пурăнакан ватăсем патне тепĕр хут çÿретпĕр. Йĕркеллех хĕл каçма пулать-и вĕсен? Çĕр улми тата ытти пахча çимĕç пур-и, çитет-и – çак тата ытти ыйтусемпе интересленетпĕр. Медицина ĕçченĕсем те ватă çынсен сывлăхне вырăна тухса тĕрĕслесех тăраççĕ, пулăшу параççĕ.

Ку çеç те мар. Район шайĕнче тĕрлĕрен мероприятисем йĕркелетпĕр, унта ватă çынсене, инвалидсене явăçтаратпăр. Çĕнĕ çул уявĕсенчен пуçласа кашни уяврах тĕрлĕрен тĕл пулусем, калаçусем ирттерĕççĕ. Палăртсах хăварас килет, район шайĕнче иртекен нумай мероприятие район пуçлăхĕ Ю. А. Иванов пуçарнипе йĕркелетпĕр. Юрий Александрович ватă çынсен нуши-тертне питĕ лайăх ăнланать. Çавăнпа та район администрацийĕн чи малтанхи тĕллевĕсенчен пĕри ватă çынсене пулăшасси пулса тăрать те.

Вырăнсенче вара çак ĕçе ял тăрăхĕсен ĕçченĕсем, ветерансен, хĕрарăмсен канашĕсем, шкул коллективĕсемпе культура ĕçченĕсем пĕрле туса пыраççĕ. Ветерансен çурчĕсенче те час-часах иртеççĕ çакăн пек мероприятисем. Сумлă юбилейсемпе те ватă çынсене вырăна тухса саламлама тăрăшатпăр.

Вырăна тухса çÿретĕн те çакă яр уççăнах курăнать, чун ăшши, тимлĕх – çакăнтан хакли çук ватăсемшĕн. Манас марччĕ çакна. Пулăшу ыйтса тилмĕрекен куççене курмăш пулса иртес марччĕ, хамăр та ватăлатпăр. Ватта сума сăвакан хăй те сумлă пулакан, текен каларăша та пурнăçах çирĕплетнĕ. Манас марччĕ çакна.

**– Тавах, Нина Пантелеевна, калаçушăн.**

**Л. ПАВЛОВА калаçнă.**

## Уяв ячĕпе

# Ватă çынсен кунне халалласа

Пĕтĕм тĕнчери ватă çынсен кунĕ çитиччен шутлă кунсем çеç юлчĕç. Çак куна халалланă мероприятисем районта малалла пыраççĕ. Вĕсем район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю. А. Иванов алă пусса çирĕплетнĕ Пĕтĕм тĕнчери ватă çынсен кунĕ умĕн ирттермелли мероприятисен районти планĕпе килĕшÿллĕн пулса пыраççĕ.

Палăртмалла, Ватă çынсен кунне кашни ял тăрăхĕнчех ирттерме палăртнă. Район администрацийĕн яваплă ĕçченĕсем аслă ăру çыннисене вырăнта тухса саламлаççĕ. Çавăн пекех пур предприятипе организацинче, учрежденинче коллективра ĕçлесе тивĕçлĕ канăва тухнисемпе тĕл пулусем йĕркелеççĕ.

Уяв мероприятийĕсем пур ветерансен çурчĕсенче те иртеççĕ. Социаллă ĕçченсем, медицина ĕçченĕсем ватăсем патне киле тухса çÿреççĕ. Уяв кунĕ умĕн ватă çынсене районти парикмахерскисенче тÿлевсĕр çÿç кастарма пăхнă, Муркашри тата Мăн Сĕнтĕрти коммуналлă мунчасенче вĕсене тÿлевсĕр çăвăнтараççĕ.

Пĕтĕм тĕнчери ватă çынсен кунне халалласа районти Культура çурчĕсемпе клубсенче уяв каçĕсем ирттереççĕ, концертсем лартаççĕ, библиотекăсенче куравсем йĕркелеççĕ, кинофильмсем кăтартаççĕ.

**Л. ПАВЛОВА.**